31-277
394
АБОНЕМЕНТ

Л. Ç. СПАССĂВ

# 11 ÇУЛ ХУШШИНЧИ КĔРЕШÿПЕ СТРОИТТĔЛСТВĂ

Хакĕ 12 пус

9(47)
С-71

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР
1931

Л. Ç. СПАССĂВ

9(47)
С-71

АБОНЕМЕНТ

# 11 çул ХУШШИНЂИ кĕрешӳпе строиттĕлствă

(Ђăваш респуплĕк Тĕпĕçтăвкомĕн 2-мĕш çеççин **Ђăваш автономийĕ 11 çул тултарнине** асăнса пулнă ђаплă ларăвĕнђе тунă токлат).

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

5516 ф.

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР—1931

Послано в производство 21|X—1931.
Подписано к печати 30|X—1931.
Редактор Л. Агаков.

Отпечатано в тип. № 1 Чувашгосиздата, Чебоксары.

Уполном. Чувашлита № 1774. Заказ № 1340. Тираж 3000 экз.
Чувашгиз № 504 ст. ф Б 130 185 Об'ем 1,5 л. 48640 п. з. в п. л

# 11 çул хушшинҫи кĕрешӳпе строиттĕлствă

*(Ҫăваш респуплĕк Тĕпĕçтăвкомĕн 2-ĕш çеççин ҫапла ларăвĕнҫе Халăх кăмиссарĕсен канашĕ претçетаттĕлĕ Л. Ç. Спассăв тунă токлат).*

Ҫăваш ĕçхалăхĕ пайанхи кун ҫăвашсен автономлă оплăçĕ пуçланса унтан ҫăвашсен сотсиалисăмпа совет респуплĕкĕ пулни 11 çул тултарнине уйавлаҭ.

Пайанхи кун ҫăваш ĕçхалăхĕ 11 çул хушшинҫи ӳсĕмсене хисепе илсе малаллахи пурнăç çулне палăртса хураҭ.

Вунпĕр çул ĕнтĕ ҫăваш ĕçхалăхĕ хăй пурнăçне хăй ирĕкĕпе туса тăраҭ. Вунпĕр çул хушши ҫăваш ĕçхалăхĕ ҫавсана тавăрсах çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешет, сотсиалисăм тăваҭ.

Çĕнĕ пурнăç тума, сотсиалисăм тума ҫăваш ĕçхалăхне аслă Октăпĕр револҫутси ирĕк паҫĕ, паттăр рапоҫҫи класăн револҫутсийĕ Ленин парттийĕ йертсе пынипе ҫăваш ĕçхалăхне ирĕке кăларҫĕ. Темиçе ĕмĕр хушши асаплăхпа хĕнхур айĕнҫе пурăннă ҫăваш ĕççынни ытти вак халăхсемпе пĕрле Октăпĕр тивлеҫĕпе ирĕккĕн сывласа йаҫĕ. Хуçалăха хăпартса пурнăçа йусас ĕç халĕ хамăр алăра.

Вунтăвата çул хушши ĕнтĕ пĕтĕм Совет сойусĕнҫи рапоҫҫи клас ҫухăнпа вăтам хресҫенсемпе пĕрле Комуниссен партти йертсе пынипе сотсиалисăм никĕсне хывса çитерес ĕмĕтпе хĕмлĕн пикенсе ĕçлеççĕ.

**Совет сойусĕнҫе ĕçлекенсемпе хресҫенсем историре нихçан пулман ҫаплă, калама çук паттăр ĕçсем тăваççĕ. Совет сойус çĕр-шывне интустрилеççĕ.** Ĕмĕртенпе етемшĕн усăсăр йухса выртакан пысăк Тнеппăр, Волхов, тата ытти шывсене пĕвелесе пысăк елек тритсă стантсисем тăваççĕ. Акă нумайа каймĕ—Атăл шывне пĕвелесе лартса калама çук пысăк електритсă стантсисем тăва-тăва лартĕç.

Авалтанпа ниме йурăхсăр сарăлса выртнă шурлăхсем çине пысăк електритсă стантсисем тăва-тăва лартаççĕ. Çĕр айĕнҫе

ӗмӗртен ӗмӗр ним усӑсӑр выртнӑ пурлӑхсене шыраса тупаҫҫӗ, унта та кунта тимӗр-тӑмӑр ӗҫлекен пысӑк савӑтсем ӳсе-ӳсе лараҫҫӗ. Кашни кун темиҫе ҫӗр трактӑр, компайӑн, автомопил кӑларакан савӑтсем ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Ҫӗр ӗҫӗнҙе хресҙен ҫыннине пулӑшма, йалхуҫалӑхне лайӑхлатма тӗрлӗ машшинсем тӑваҫҫӗ. Пиншер ҫухрӑм хушши хӑйӑр вӗҫсе тӑракан пуш хирсем урлӑ, ҫӳлӗ тусем урлӑ, сӗм вӑрмансем урлӑ ҙукун ҫулсем хываҫҫӗ.

Ҫав таран хӑватлӑ утӑмсемпе сотсиалисӑмла промышлӗннӑҫ вӑйланса ӳссе пыни йалхуҫалӑхне те патгӑрӑн ӳссе пыма вӑйхӑ-ват паҙӗ, васкасах малалла уттарать. Ҙухӑнпа вӑтам хресҙенсем уйрӑм, сапаланҙӑк хуҫалӑх йӗркине пӑрахса, пысӑк хуҫалӑхсем, колхоссем туса, авалхи ӗҫ йӗркине ҫӗмӗрсе тӑкса, ҫӗнӗ майпа—сотсиалисӑм ҫулӗпе—Ленин партти кӑтартнӑ ҫулпа кайаҫҫӗ. Йал хуҫалӑхӗн пӗтӗм сӑнсӑпаҙӗ ҫулран ҫул улшӑнса пырать.

Ҫавӑн пек ҙаплӑ ӳсӗм пулнӑ майпе ӗнтӗ **кӑпиталисла патшалӑхсене технӗккӑпа экономӗк тӗлӗшӗнҙен ҫак вунӑ ҫул хушшинҙех хуса ҫитсе иртсе кайас, кӑҫалах Совет сойусӗнҙе сотсиалисӑм никӗсне хывса ҫитерес** сатаҙсем тухса тӑма пултарнӑ.

Ҫав историри пысӑкран та пысӑк строиттӗлствӑ ӗҫне, строиттӗлствӑ хӑвӑртлӑхӗсенҙе тӗлӗнмелле хӑватсем туса пысӑк ҫӗнтерӳпе пыракан пролеттари патшалӑхне клас тӑшманӗ йаланах хирӗҫ тӑрать.

**Кӗрешӳ пӗтмен.** Хамӑр ҫӗршыври шалти клас тӑшманӗ хӑйне хаваслантаракан империалиссемпе хире-хирӗҫ ҙӗнкелешсе илеҫҫӗ. Совет сойусне хирӗҫ кӑларнӑ ирсӗр, суйа елексем сарас кампани ҫыпӑҫакан ҫӑра пылҙӑк пек тӗнҙе тӑрӑх шӑвӑнать.

**Типломатти капинеҙӗсен улах кӗтессисенҙе, империалисла пат шалӑхсен тӗп штапӗсен вӑрттӑн уйрӑмӗсенҙе йунлӑ интервентси ӗҫне хатӗрленеҫҫӗ.**

Пролеттариат тӑнпуҫне пӑтратас ӗҫе туса тӑракан пӗтӗм тӗнҙери икӗ питлӗ ултаваҫ меншевиксем, фашшисӑмӑн вӑрҫӑллӑ политтӗк ҫыннисем, пуршуаллӑ науккӑн проҫтитутсиллӗ шыҫмак мантаринӗсем, кӑпиталисла ҫарсен маршшалӗсем—пурте витӗр курӑнми сӗрӗм ҙаршавӗ хыҫӗнҙе сотсиалисӑм тӑвакан ҫӗршыв ҫине вӑрҫӑпа тапӑнма хатӗрленеҫҫӗ.

**Пӗтӗм кӑпиталисла патшалӑхсене тарӑнланнӑҫемӗн тарӑнланса пыракан криҫӗс йарса илнӗ. Криҫӗс хуҫалӑх тӗлӗшӗнҙе анҙах мар, ҙылай патшалӑхсенҙе политтӗк криҫӗсӗ пула пуҫларӗ.**

Тарӑна кайнӑ криҫӗспа ђӗтренсе тӑракан кӑпиталисӑм тӗнђи пирӗн ӳсӗмсенђен хӑраса ӳкнӗ пирки пире тата хӑвӑртраххӑн ӳсме ђарасшӑн, сотсиалисӑм тӑвакан Совет сойусне хыпса ҫӑтасшӑн вӑрҫа хатӗрленет. Хӑйсен ҫӗршывӗнђи ӗҫхалӑхне кунтанкунах хӗстерсе, ӗҫҫыннисен пурнӑҫне ђӑтма ҫук йӑвӑрлатса пыраҫҫӗ. Халӗ кӑпиталисла патшалӑхсенђе **35 мӗлйун ытла рапођђи ӗҫсӗр,** ҫӑкӑр-тӑварсӑр тӑрса йулнӑ. Ҫемйисемпе шутласан—120 мӗлйуна йахӑн ӗҫсӗр выҫӑхаҫҫӗ.

Криҫӗсран тухас майпа кӑпиталисӑм тӗнђи урсах ҫӗнӗрен империалисӑм вӑрҫине хатӗрленет. Ку вӑрҫӑ ђи малтан—Совет ҫӗршывне хирӗҫ пулмалла. Вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе кайакан расхутсем ним йӗркесӗр пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӳсеҫҫӗ. Кӑпиталисла патшалӑхсем вӑрҫа йепле хатӗрленнине ҫак ђыхвӑрсем аван кӑтартаҫҫӗ.

Франтси, Ӑнкли, Ҫурҫӗр Америк, Иттали, Йаппони патшалӑхӗсем 1914-мӗш ҫултан вара ҫар ӗҫне ҫакӑн ђухлӗ расхут кӑларса пынӑ:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1914-мӗш ҫулта | — | 1182 | мӗлйун | толлӑр |
| 1923-мӗш | „ | 1828 | „ | „ |
| 1928-мӗш | „ | 2167 | „ | „ |
| 1930-мӗш | „ | 2324 | „ | „ |

Ҫапла ӗнтӗ империалисӑм вӑрҫине хатӗрленес ӗҫе кайакан расхут 1914-мӗш ҫултан вара **икӗ хут ытла ӳснӗ. Вӑрҫӑ ӗҫне ҫав тери нумай укҫа-тенкӗ кайни вӑл—кӑпиталисла патшалӑхсем пӗтӗм вӑйа хурса Совет ҫӗршывне хирӗҫ вӑрҫа хатӗрленнине пӗлтерет.** Совет сойусӗпе пођшевисӑма вутпа йун айне туса ишӗрсе ҫӗмӗрсе тӑкасси—ҫакӑ ӗнтӗ кӑпиталисла патшалӑхсен тӗп шухӑшӗ.

Анђах кӑпиталисӑм йӗрки хӑй кӑларса тӑратнӑ хирӗҫӳсене татса хума нийепле майпа та пултараймасть. **„Кивӗ тӗнђе хӑйӗн хушшинђи ӳссе пыракан йӑвӑрлӑхсем хӑйнех ытларах ыраттарса тивнине туйать. Кивӗ тӗнђе халӗ ӗнтӗ хӑй тытӑнса тӑрас пирки тӑракан тӗп ыйтусене татса пама пултараймасть“.**

Рапођђи клас Коминтернӑн хӗрлӗ йалавӗ айӗнђе пит те хӗмлӗн, пит те паттӑрӑн кӑпиталпа кӗрешет. Кӑпитал шалђи тулсах пырать. Ак нумайах каймӗ—пӗтӗм тӗнђипе сотсиалисӑмла револютси тапранса кӑпитала тымарӗпех кӑкласа сирпӗнтерӗ.

**Рапођђи класпа хресђен тытса тӑракан хурҫӑ пек ҫирӗп ӗҫ патшалӑхӗ—Совет сойусӗ хӑватлӑран хӑватлӑ ӳссе пырса сотсиалисӑм тапхӑрне кӗђӗ. Кӑҫалхи ҫул сотсиалисӑмла економӗк никӗсне**

**хывса çитеретпӗр.** Совет çӗршывӗнҗе халӗ ӗнтӗ сотсиалисӑм пайӗ кӑпиталисӑмла пайа хулара çеç мар, йалта та татӑклӑнах çӗнтерсе илҗӗ. Сотсиалисӑмла еккономӗк никӗсне хывса çитерессине епӗр поҗшевикла хӑвӑртлӑхсемпе туса пыратпӑр. 1927-мӗш çултан пуçласа 1930-мӗш çула çитиҗҗен çӗнӗрен 323 претприйатти ӗçе кӗнӗ. 1931-мӗш çулта—пӗр çулталӑк хушшинҗех—тата 518 çӗнӗ хапрӑк-савӑтсем ӗçе кӗмелле.

Кӑçалах йалхуçалӑх тӑвакан протуксин виç пайран икӗ пайне совхоссемпе колхоссем тӑваççӗ. Пӗтӗм җухӑнпа вӑтам хресҗен колхоса куçса пынӑ майӗпе кулаксен класне тӗпӗ-йӗрӗпе пӗтерсе пыраççӗ.

Җӑваш ӗçхалӑхӗ те пӗтӗм Совет сойусӗнҗи ӗçхалӑхӗпе пӗрле çӗнӗ пурнӑçшӑн пикенсех кӗрешет, сотсиалисӑмӑн çулӗпе, Ленин партти кӑтартнӑ çулпа, хуçалӑхпа куҗттур ӗçне хӗрӳллӗ, паттӑр утӑмсемпе вӑйлатса пыраҫ.

Октӑпӗр реворутсиҗҗен Җӑваш çӗршывӗнҗи рапоҗҗисем, патраксем, җухӑнпа вӑтам хресҗенсем ытти вак халӑхсемпе пӗрле ним тивӗççӗрлӗхре пурӑннӑ. Патша правиттӗлстви, çӗрулпуҗӗсем, ултавӑç пупсем, çӑхан кулаксем рапоҗҗисемпе хресҗенсен йунне ӗмсе пурӑннӑ.

## Җӑвашсен ӗлӗкхи йӑвӑрлӑхӗсем.

Җӑваш ӗççыннисем ӗлӗк, реворутсиҗҗен, кӑпитал пусмӑрӗ айӗнҗе хурлӑх курса пурӑннӑ җух, пӑртакках кӑмӑл хуçӑлсан, арçын-хӗрарӑмӗпе, нимре те ырлӑх çуккине кура:

> Асран пӗр кайми аки-сухи,
> Трен хупӑттӑр, шӑрҗӗ кастӑр,
> Йаравар сене вӑй-хӑват патӑр,
> Акнӑ тырри хулӑм пултӑр,

тесе йурлаҗҗӗç те пӗр çавра, пӗҗӗк аҗа пек шӑпӑ-ӑ-р... куççуҗ йухтарса макӑрса йараҗҗӗç.

Ырӑ пурнӑçпа савӑннӑран мар çав ӗнтӗ вӑл,—киревсӗр мӑшкӑл пусмӑрлӑ пурнӑç йӑвӑрлӑхӗ ытла нумай кӳрентерни пе ӑшҗик тулса çитсе—вӗри куççуҗ тухнӑ.

**Хӑрушӑ самана пулнӑ çав ун җухне. Җӑваш җухӑнпа вӑтам хресҗенне кӑпитал сӑнҗӑрӗ калама çук хайар нуштара тытса усранӑ. Патша кӑларнӑ саккунсем тӑрӑх ӑна пур йенҗен те хӗстернӗ, пурте җӗпӗтнӗ, унтан пурте мӑшкӑланӑ. Лайӑхрах çӗрсем çинҗен**

**хăваласа тăвайкки хĕрне, тăмлă, хăйăрлă йе инçетри шур кĕллĕ пархатарсăр, çырма-çатраллă çĕре куçарса йанă.**

Лайăх çĕрсене—улпутсем, хуçасем, мăнастирсем, ҫиркӳсем тата йал кулакĕсем çавра-çавра илнĕ. Куланай укçине (хырçă) çултан çул хăпартса пырса, йулашки выҫăх-ҫĕрлĕхне, ĕçхатĕрĕсене сутса, выççи-туттине пăхмасăр, парăм тӳлеттернĕ.

Пурнăç хавшак майпе ĕçхатĕрĕсем наҫар пирки çĕр ĕçне ҫипер тума пултарайман. Выҫăх-ҫĕрлĕх сахал майпе ана-çарана вăхăтра çемçетсе тислĕкпе йусаса тăма пултарайман. Çавăнпа çултан çулах çĕр пăсăлса наҫарланса, тырпул тухăçĕ ҫакса пынă Ҫас-ҫасах уйар çанталăкпа тырпул вĕтĕнсе ларнă пирки—выçлăх çулсем килсе амантнă.

Çавнашкал пархатарсăр хурлăх пурнăçран тухма пулăшакан никам та пулман. Кăпиталпа патша правиттĕлстви ҫухăнпа вăтам хресҫенсене лайăхрах ĕçхатĕрĕсем—машшинсем туса парасси çине çаврăнса та пăхман. Хут вĕрентсе, пурнăç ăслайĕсемпе паллаштарса, наукка кăтартнисемпе усă кăтартса пурнăçа лайăхлатасшăн пулман.

Патша правиттĕлстви ĕçлекенсемпе хресҫенсене тĕттĕмлĕхре тытса тăнă. Вĕсене вĕренткелени те пурнăçра усăллă пулман, мĕншĕн тесен ăна тĕттĕм халăха улталаса тата вăйлăрах ĕмсе пурăнма çăмăлтарах пултăр тесе вĕренткеленĕ. Ĕçлекенсемпе хресҫенсене турăран хăрама, патшана йуратма, кăпиталиссен çĕршывне йуратма вĕрентнĕ, тата хапрăксене, савăтсене, çĕре тата ытти мĕн пур пурлăха улпут-хуçа аллинҫе тытса тăрас йĕркене хисеплеттерес тĕлĕшпе вĕренткеленĕ.

Ҫăваш ҫухăнпа вăтам хресҫенне кайа йулнăçемĕн кайа хăварса, кытăран хытăрах пусмăрласа, ҫинавниксен ултав ĕçĕпе, пупсен суйипе хăрата хăратах мăйкăҫласа пынă.

**Ҫăваш ĕçхалăхĕ шалтан шала йăвăрлăха—парăма кĕрсе пынă.** Вара кашни кунах, патша ҫинавникĕсем килсе йулашки пурлăхне туртса илсе сутассине, çурăм тăрăх саламат тивессе кĕтсе, кăраса пурăннă. Патша ҫинавникĕсен шăнкрав сассине илтсен, шартах сиксе тискер кайăк пек, куç умне пулас марҫĕ-ха, тесе, пытаннă. Пайтах ҫăваш ĕççыннин ҫĕри сиксе тухас пек тапнă.

Кулаксем йал хушшинҫе патша шантарĕсем вырăнҫе, патша ҫинавникĕсемпе пĕр кавар пулса, ҫухăнпа вăтама хĕссе пурăннă. Вĕсем ҫухăнсен вăйĕпе пуйса, нушта куракансен ĕнси çине утлансах, ҫейепе улталаса кӳпсе пурăннă. „Ырă çын“ тесе ҫухăнпа

вăтама куçран пăхтарнă. Йӳн хакпа тырпуллине илсе хуçасене сутса пуйнă. „Тĕпĕрт сикетпĕр,улпут пек пурăнатпăр“ теҕҕĕç те лах-лах-лах!—кулаҕҕĕç ҕухăнсенҕен мăшкăласа. Çавнашкал пурнăç пулнă ĕлĕк, револҕутсиҕҕен. Çавăнпа ҕухăнпа вăтамăн ҕасҕасах вĕри куççулҕ тухнă.

# Ĕлĕкхи хуçалăхпа кулҕттур.

Хуçалăхпа кулҕттур тĕлĕшĕнҕен пăхсассăн ҕăваш ĕçхалăхĕн пурнăçĕ пит те йавăр пулнă. Промышлĕннăç çукпа пĕрех пулнă, ҕăваш хушшинҕех ĕç тупма та май килмен. Çавăнпа ҕăваш патракĕсемпе ҕухăнсем Ҕулхулана, Хусана, Самара тата ытти йут хуласене кайса калама çук йӳн хакпа, темҕул мăшкăлсене ҕăтса ĕçлесе пурăннă.

Алăста ĕçĕ ҕылайах пулнă пирĕн, анҕах вăл питĕ пархатарсăр пулнă. Пуринҕен ытла ҕăпта çапни, çăпата туни, тата карçынккăсем туни пулнă. Вăл ĕçсем ĕлĕк ытла йӳн, сывлăха пĕтерекен ĕçсем пулнă, мĕншĕн тесен ун ҕухне хуçасем ĕç укçи калама çук сахал параҕҕĕç, маçтерской тавращĕ пулман.

Кулҕттур тĕлĕшĕнҕен ҕăваш ĕçхалăхĕ пит кайа йулнă пулнă Хут пĕлекенни çĕр çын пуçне 17—18 çын анҕах пулнă. Хĕрарăмсем хушшинҕе унтан та сахалтарах пулнă. Шкулсем сахал пирки вĕренме 7—8 çухрăм хушши çӳреме тивнĕ. Нумай йалта йалĕпе те 1 çын, 2 çын анҕах хут пĕлнĕ. Аслăрах шкулсенҕе вĕренме ирĕк пулман. Хулари шкулсене ҕухăн ҕăваша кĕртмен, вĕсенҕе пуйансен аҕисем анҕах вĕренкелнĕ.

Ҕăваш хушшинҕе акрономсем, ыылҕăх тухтăрĕсем, етем тухтăрĕсем, тата ытти ăстаçăсем пит сахал пулнă. Ҕăвашран тухнă ăстаçă çукпа пĕрех пулнă, ҕăваш ĕçхалăхĕ хушшинҕе пайтах ҕир-ҕĕрсем сарăлса сывлăха амантнă.

Çапла тискер киревсĕр пурнăç пулнă ĕнтĕ ĕлĕк ҕăваш ĕçхалăхĕн. Пайтах куççулҕ тăкнă, пайтах вĕри сывлăшпа хашканă. Ĕмĕр хуйхăрса пурăннă, нихăçан çут çанталăк курассăн туйăнман.

Пусмăрта пăҕăхнă ҕăваш ĕçхалăхĕ, Раççейри ытти ĕçхалăхĕпе пĕрле пĕрре çеç мар, темиçе хут та патша пусмăрне хирĕç тăрса пăхнă, пуринҕен ытла Çтенккă Раçĕн ҕухне, Пăкаҕав ҕухне, 1905-мĕш çулта. Анҕах рапоҕҕисемпе çыхăну пулман пирки, хăватлă кĕрешӳсенех патшасен çарĕсем пусара пусара лартнă; ҕăваш ĕçхалăхне тата хытăрах мăйкăçласа пынă.

# Октăпĕр револютси тивлечĕсем.

Октăпĕр револютси çавнашкал авалхи тискер пурнăçа пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкрĕ, самана тĕпĕ-йĕрĕпе улшăнчĕ.

Мул хуçисемпе улпутсен тата кулаксен влаçне пĕтерсе, Ленин партти йертсе пынипе, рапоччисем чухăнпа вăтам хресченсемпе пĕрлешсе влаçа хăйсен аллине туртса илсе—**Совет влаçĕ турĕç.**

**Совет влаçĕ помешчĕксен, мăнастирсен, чиркӳсен, улпутсен, хуçасен тата кулаксен çĕрĕсене туртса илсе—чухăнпа вăтам хресченсен аллине пачĕ. Çапла вара Чăваш респуплĕкĕнче чухăнпа вăтам хресченсен 75 пин кектар таран çĕр хутшăнчĕ.** Чухăнсем чуралла пурнăçран хăтăлчĕç, вăтамсем ĕмĕр çĕре тара илсе помешчĕксене укçа сапласа пурнасран хăтăлчĕç.

**Совет влаçĕ,—хуçасен, улпутсен, мăнастирсен тата кулаксен ĕçхатрисене, мĕн пур вылăх-чĕрлĕххисене туртса илсе чухăнпа вăтам хресченсене пачĕ.** Çапла вара, лашасăр, ĕçхатĕрĕсĕр хурлăх курса, çын куçĕнчен пăхса пурăннă чухăнсем—пурăнма вăй илчĕç. Нихçан тăраниччен апат çиме ĕмĕтленмен чухăнсем — илемлĕ тутă пурнăç тума тытăнчĕç.

**Совет влаçĕ мĕн пур патша вăхăтĕнчи парăмсене тĕп туса хучĕ.** Çапла вара чăваш чухăнпа вăтам хресченĕсем ĕмĕрхи парăм пусмăрĕнчен тухрĕç, ĕçхалăхĕн чĕри лăпланчĕ. **Совет влаçĕ—чухăнран вуçех налок илмелле мар, вăтамсене тĕрлĕ çăмăллăхсем памалла, налок йăвăрлăхне кулаксем çине сулмалла турĕ.** Çапла вара чухăнпа вăтам хресченсем ĕмĕрхи киревсĕр йĕркерен—йулашки вылăх-чĕрлĕхпе ĕçхатрине туртса илсе сутасран хăгăлчĕç.

**Совет влаçĕ чăваш ĕçхалăхне, ытти ĕçхалăхĕпе пĕрле ирĕке кăларса, пĕтĕм ĕçхалăхĕпе танаштарчĕ.** Çапла вара темиçе ĕмĕр хушши мăшкăла чăтса пурăнни пĕтрĕ.

Чăваш ĕçхалăхĕ ытти ĕçхалăхĕпе тăванланса, ала-алăн тытăнса çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме тытăнчĕ, пĕтĕм Раççейри ĕçхалăхĕпе пĕрле паттăрăн кĕрешсе авалтанпах ĕçхалăхне тăлласа тăракан сăнчăрсене татса тăкрĕ.

Пусмăрпа тĕттĕм танатинче пăчланса асапланса пурăннă рапоччи клас, ĕçхресчен, мĕн пур ĕçхалăхĕ ирĕке тухрĕ.

# Йăвăр çулсем.

Малтанхи çулсем йăвăр çулсем пулҫĕç. Улпутсем, мул хуçисем, хапрăк-савăт хуçиçем, патша ҫинавникĕсем, пупсемпе кулаксем влаçа хăйсен аллинҫен нийепле те вĕçертесшĕн мар пулса вăрçрĕç. Вĕсене пур йут патшалăхри кăпиталиссем пулăшрĕç. Раççейе тавраллах вутпа, хĕçпăшалпа, тупăсемпе çавăрса илҫĕç. Виçĕ çул хушши пĕр ҫарăнмасăр калама çук вăйлă клас вăрçи пыҫĕ. Совет Раççейне сахал çĕршывпа тăратса хăварса пăхрĕç, 13 кĕпĕрне çĕршывĕпе йулса куртăмăр. Калама çук йăвăр пурнăç пулҫĕ.

Анҫах рапоҫҫисемпе хресҫенсем, Комуниссен партти тĕрĕс çулпа йертсе пынипе—мул хуçисене парăнмарĕç. Шур çарсене çĕмĕрсе салатса тăкрĕç. Влаçа хăйсен аллинҫен вĕçертмерĕç. Кăпиталиссене тепĕр хут, ĕлĕкхи пек пăхăнма парăнмарĕç.

Çав хĕмлĕ кĕрешӳре ҫăваш ĕçхалăхĕ те ытти ĕçхалăхĕпе пĕрлех йунашар пынă, пĕрле çапăçнă, пĕрле кăпитал çарĕсене çĕмĕрнĕ, пĕрле Совет влаçĕшĕн йун тăкнă, пăшалпа-хĕçпе тăшмана пĕтернĕ. Çапла вара авалхи киревсĕр тискер пурнăç тепĕр хут çавăрнасран—ҫăваш ĕçхалăхĕ хăтăлҫĕ.

Патша ҫинавникĕсем—ĕççынинин йунне ĕмме йуратакан сĕлĕхсем, улпут-çăхансем, тискер кăпиталиссем, çăмăллăха тухас тесен турра кĕлтумалла тесе улталакан пупсем, йал кулакĕсем—пултараймарĕç. Ĕçхалăхне тепĕр хут асап хуранне кĕртсе пăрахаймарĕç.

Империалиссен вăрçинҫех хавшаса çитнĕ хуçалăх краштăн вăрçипе тата пушшех йапăхланҫĕ. Çавах та ирĕклĕ ĕçхалăхĕ, вĕсемпе пĕрле ҫăваш ĕççынни те, кăпиталиссен вăйне çĕмĕрсе тăкрĕ. Октăпĕр ирĕкне çăлса хăварҫĕ, унтан вара хуçалăха аталантарса сотсиалисăм çулĕпе йама тытăнҫĕ.

Вăрçăсен йăвăрлăхĕсене тӳссе иртернипех çитмерĕ, 1921-мĕш çулта пĕтĕм Атăл тăрăх калама çук хăйар выçлăх пулҫĕ. Ҫăваш ĕççынни выçă вилĕм патне пырса тăҫĕ. Мăйан, курăк, йăвăç çулçи, йĕкел çинĕ ун ҫухне. Нумайшĕ çуртйĕр çинҫен кив улăма антарса, кĕскен вакласа-тӳсе çăнăх пек туса, пашалу пек туса çинĕ. Хăш-пĕрисем çырмари хĕрлĕ тăма та çисе пăхнă. Выçăхса çитсе теприсем харпăр-хăй аҫине вĕлерсе пĕçерсе çини те пулнă.

Çавнашкал вилĕмрен хăтăлассине ĕмĕтленме çук вăхăтра ҫăваш ĕçхалăхне **Мускаври пролеттарисем пит нумай пулăшрĕç**. Комуниссен парттийĕ тĕрĕс çирĕп çул-йĕрпе илсе пынă майпе

Совет правиттĕлствипе пĕтĕм рапођђи клас, пĕтĕм ĕçхалăх выçлăхпа тимлĕн кĕрешнĕ пирки пирĕн ђăваш ĕçхалăхĕ вилсе пĕтесрен çăлăнса йулђĕ.

Хăрушă йăвăр вăхăтсем иртсе карĕç. Вăрçăсемпе, выçлăхсемпе суранланса йулнă хуçалăха йусама тытăнђĕ ђăваш ĕçхалăхĕ.

**Совет влаçĕ çине тăрсах тимлесе ђăваш ĕçхалăхне пулăшса тăнă пирки, Ленин парттин натси политтĕкне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынă майпе, кĕске вăхăтрах ђăваш ĕçхалăхĕ хуçалăха мăн сурансенђен тӳрлетрĕ.**

## 11 çул хушшинђи çитĕнӳсем.

Ĕлĕк, револђутсиђђен, ђăваш халăх хуçалăхĕ хавшаса ђакса пынă. Халĕ вăл çултан çулах ӳсœ пырать. Пирĕн ӳсĕмсем ђăнах та пит пысăк, вĕсемпе епĕр хавасланма та пултаратпăр. Ђыхвăрсемпе илсен, пирĕн ӳсĕмсем çапла курăнаççĕ.

**Халăх хуçалăхĕн тĕп фонђĕ:**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1927—28 | çулта | 109 | мĕлйун тенкĕлĕх | пулнă |
| 1928—29 | „ | 120 | „ | „ |
| 1929—30 | „ | 134 | „ | „ |

1931-мĕш çулта 170 мĕлйун тенкĕлĕх тĕлнех çитмелле.

**Хуçалăха тĕпрен укçа-тенкĕ хывнине** пăхсан, çак ӳсĕмсем пулнă.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1927—28 | çулта | 3.364.000 | тенкĕ | панă |
| 1928—29 | „ | 7.764.000 | „ | „ |
| 1929—30 | „ | 16.485.000 | „ | „ |

1931-мĕш çулта 29.000.000 тенкĕ таран пама йышăннă.

Хуçалăха тĕпрен укçа-тенкĕ хывнă майпе, ђăваш халăх хуçалăхĕ тăвакан протукси те ӳссех пырать. Ăна çак ђыхвăрсем лайăх кăтартса параççĕ.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1926—27 | çулта | 61,1 | мĕлйун тенкĕлĕх | протукси | тунă. |
| 1927—28 | „ | 90,6 | « | „ | „ |
| 1928—29 | „ | 119,5 | „ | „ | „ |
| 1929—30 | „ | 126,7 | „ | „ | „ |

1931-мĕш çулта 175,5 мĕлйун тенкĕлĕхе çитермелле.

Çапла ĕнтĕ çултан çулах пирĕн халăх хуçалăхĕ вăйланса нумай протукси тăвакан пулса пырать.

Пире, сотсиалисăм тăвакансене, хуçалăхăн ӳсĕмĕнђе сотсиалисăм пайĕ мĕнле ӳссе пыни интереслет. Çав йенђен пăхсан пирĕн ђăн та ђăнах татăклă çĕнтерӳсем пулса пыраççĕ. Ăна ђыхвăрсенђен те витĕрех курма пулать.

**Сотсиалисăм çектăрĕн протуксийĕ:**

| | | |
|---|---|---|
| 1927—28 çулта | 10,8 прођђăн пулнă | |
| 1928—29 „ | 21,6 „ | „ |
| 1929—30 „ | 31,6 „ | „ |

1931 çулта 53,7 прођђăна çитмелле.

Çурри ытла ĕнтĕ халăх хуçалăх тăвакан протукси сотсиалисăм пайĕн. Паллах ĕнтĕ, **сотсиалисăм пайĕ çултан çулах хăватлăн ӳссе пыраť.**

Çапла халăх хуçалăхĕ ӳссе пыни, халăх хуçалăхĕнђе сотсиалисăм пайĕ çĕнтерсе пыни вăл—Совет сойусĕнђе сотсиалисăмла екксномĕк никĕсне хывса çитерес тĕлĕшре Ђăваш респуплĕкĕ те татăклă çĕнтерӳсем тунине пĕлтерет. Вăл çĕнтерӳсем Елмен „Ђăваш çĕршывĕ сотсиалисăм çулĕнђен пăрăнса йулаť“ тенĕ елеке, натсионал-шовиниссен теорисене пĕтĕмпех çапса çĕмĕрсе салатаť.

**Çак 11 çул хушшинђи пысăк ӳсĕмсем вĕсем кĕрешӳ çулĕпе пырса тунă çĕнтерӳсем пулаççĕ.** Пирĕн çĕнтерӳсем çинђен йут патшалăхри рапођђисемпе хресђенсем те пĕлеççĕ.

**Епĕр çавнашкал вăйлăн, пысăк утăмсемпе ӳссе пыни Комуниссен парттин тĕп çулйĕрĕ ĕçе тĕрĕссĕн кĕрсе пынинђен килет,** Комуниссен парттин Ђăваш орканисатсинђе, унăн Опкомĕ, унăн ответлă çекреттарĕ Çеркей Порфирђ Петров йертсе пырса, Ленинла натси политтĕкне тĕрĕссĕн хурçă пек çирĕппĕн тытса пынинђен килет. Ђăнахах та Ђăваш Опкомĕ Петров йулташпа пĕрле Ђăваш орканисатсинђе парттин тĕп çул-йĕрне çирĕппĕн тытса тăрас пирки ђăн-ђăнах пољшевикла кĕрешнĕ. Ленин партти çеç натси политтĕкне тĕрĕссĕн тытса пыма пултараť. Вăл сотсиалисăм ĕçĕшĕн сийен кӳрекенсемпе хыτă кĕрешсе пыђĕ. Сылтăм сулăнђăксемпе те, „сулахай“ сăмахсемпе витĕнсе сылтăмрисен ĕçне тăвакансемпе те йаланах вирлĕ кĕрешсе пыђĕ.

## Промышлĕннăç.

Хуçалăхри уйрăм пайсенђе мĕнле ӳсĕмсем пулнине пăхсан, çаксем курăнса тăраççĕ. Ђи малтан промышлĕннăçа илер.

Окťапĕр револ̆утси панă автономи ирĕкĕпе 11 çул хушшинђе пирĕн промышлĕннăç пит пысăк утăмсем турĕ. **Ĕлĕкхи вак-тĕвек претприйаттисем вырăнне Ђăваш распуплĕкĕнђе темĕн пек пысăк кикантсем ĕçлеççĕ.** Куславккари çуртйĕр савăтне илсен, вăл хăйех мĕн пур ĕлĕкхи вак претприйаттисем панă протуксисенђен темĕн ђухлĕ ытлашши тавар кăлараť. Патша вăхăтĕнђи пур промыш-

лĕннăç претприйаттисем виç мĕлйун çур тенкĕрен ытла тăман. Куславккари çуртйĕр савăђĕ пĕђђен 8 мĕлйун тенкĕ ытларах тăрат.

Промышлĕннăç мĕнле ўснине ђыхвăрсемпе кăтартсан, ĕç çакăн пек:

1913 çулта Ђăваш республĕкĕнђе 29 вак-тĕвек претприйатти пулнă. **Халĕ 34 пысăк хапрăк-савăт:** Çĕмĕрле кăмпинађĕ—6.700.000 тенкĕ тăрат. Çĕмĕрлери „Пођшевик" савăт—3.200.000 тенкĕ тăрат, Куславккари çуртйĕр савăђĕ, Енĕшпуçĕнђи, Иванăвăри кирпĕђ савăђĕсем, Толкопођанăри скăпитар савăђĕ 210.000 тенкĕ тăрат, Вăрнарти фосфорит савăђĕ—786.000 тенкĕ тăрат, Шупашкарти, Канашри електритсă стантсисем т. ыт. те.

**Промышлĕннăçа вăйлатма укçа-тенкĕ çулран çул ўстерсе парса пыратпăр.** 1925—26 çулта промышлĕннăçа 232 пин тенкĕ хунă, 1928—29 çулта 3.289.000 тенкĕ. 1929—30 çулта уйрăм кварттăлпа пĕрле 7.570.000 тенкĕ, кăçал—9.520.000 тенкĕ паратпăр, вăл шутран 9 мĕлйун тенкĕ ытла çĕнĕ хапрăк-савăтсем лартма памалла.

**Пирĕн промышлĕннăç претприйаттисен протукси те нумайран нумай тухса пыма пуçларĕ.** 1925—26 çулта 5.069.000 тенкĕлĕх кăларнă, 1928—29 çулта 7.635.000 тенкĕлĕх, 1929—30 çулта уйрăм кварттăлпа пĕрле 11.642.000 тенкĕлĕх, кăçал, 1931 çулта, 27.415.000 тенкĕлĕх кăлармалла.

**Промышлĕннăçри рапођђисен йышĕ те ўссех пырат.** 1926—27 çулта 1.080 рапођђи пулнă, 1928—29 çулта 1.480 рапођђи, 1929—30 çулта 2.245, уйрăм кварттăлта 2.865, хаљ 4.080 рапођђи ĕçлет, 5.300 çынна çитмелле; 1926—27 çулпа танаштарсан 4 хута йахăн ўснĕ.

**Рапођђисем хушшинђе ђăвашсем йышлансах пыраççĕ.** 1929—30 çулта ђăваш рапођђисен йышĕ 35 прођђăнран та иртмен, кăçалхи апрелĕн 1-мĕш тĕлне 51 прођђăна йахăн çитет. Анђах ку тата сахал-ха вăл. Пуринђен ытла пысăк квалификкатсиллĕ ђăваш рапођђи сахал, йалан хура ĕçре, йўнĕ тăракан ĕçре. Çавăнпа та пирĕн ђăвашсене пысăк квалификкатси парассишĕн калама çук пикенсе ĕçлемелле.

**Рапођђисен ĕç укçи хăпарсах пырат.** Вăтамăн шутласан, çул талăк хушшинђе пĕр рапођђи çакăн ђухлĕ укçа илнĕ: 1924—25 çулта 345 тенкĕ, 1929—30 çулта 637 текнĕ, кăçал 700 тенке çитмелле. Ку ĕнтĕ Ђăваш республĕкĕнђи претприйаттисенђи рапођђисен пурнăçĕ лайăхлансах пынине кăтартат.

Пĕр рапоҫҫи вăтамăн шутласан:—1926—27 ҫулта 4.100 тенкĕлĕх тавар тунă, 1928—29 ҫулта 5.200 тенкĕлĕх, кăҫал 6.700 тенкĕлĕх кăлармалла.

**Ĕҫ тухăҫлăхĕ пирĕн промышлĕннăҫра ÿссех пырать**, анҫах планпа йышăннине кăҫал тултарсах пырайман претприйаттисем ҫылай, ҫавăнпа та ратсионалисатси йĕркипе, сотсиалисăмла ăмăрту урлă, утарлă ĕҫлесе ĕҫ ÿсĕмне, ĕҫ тухăҫне тата нумай ÿстермелле, пĕлтĕрхинҫен пирĕн вăтамран 39 проҫҫăна ҫитиҫҫен хăпартмалла. Ĕҫĕн пахалăхне (каҫҫĕствине) пирĕн претприйаттисенҫе нумай хăпартмалла, каҫҫĕстă наҫарри ҫипер мар вăл, таварăн хăйне лаpакан хакне 10 проҫҫăнран кайа мар йÿнетмелле. Ҫылай претприйаттисенҫе пирĕн йышăннă сатанисене пурнăҫа кĕртсе пыраймаҫҫĕ. Прорывсем пулса тăраҫҫĕ. Кăҫалхи иртнĕ 6 уйăх хушшинҫе пирĕн респуплĕкри промышлĕннăҫре ҫăнахах ҫылай пысăк прорывсем пулса тăҫĕҫ. Ҫĕнĕрен тăвакан претприйаттисене планпа йышăнса хунă срукрах ĕҫе тытăнтарма пултараймарĕҫ. Вăхăтра туса пĕтерейменĕҫ. Промышлĕннăҫ тăвакан протукси те планпа йышăннинҫен кайарах тухать, ĕҫ тухăҫĕ ҫылай претприйаттисенҫе сатанинҫен кайра тăрать. Таварăн хăйне тума ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшре те ҫылай пысăк прорывсем— планпа йышăннă ҫухлех йÿнетеймен, хăш-пĕр претприйаттисенҫе йÿнетес вырăнне ÿстерсе йани те пур.

Ҫав прорывсем вĕсем пĕр йенҫен—пирĕн претприйаттисенҫе хосрасҫотлă ĕҫ йĕркине ҫăн-ҫăнăх пурнăҫа кĕртсе ҫитерменнинҫен, хосрасҫотлă ĕҫ йĕркине ҫехсем, прикатăсем патне ҫитерменнинҫен килеҫҫĕ. Тепĕр йенҫен —претприйаттири ĕҫсене куллен кун виттĕр пĕлсе тăманни, йалан сыхă тăрса асăрхаса кирек мĕнле кăлтăксене те ҫийĕнҫех йусаса пыманнинҫен те килет. Тата хăшпĕр претприйаттисенҫе тиректăрсем претприйаттире ҫăн-ҫăнах пĕр хуҫа пек (йетинонаҫҫаљнĕк) пулса ĕҫлес йĕркене ҫиперрĕн пурнăҫа кĕртсе ҫитерменни те пирĕн ĕҫре нумай ҫăрмантарать. Ҫÿлте каланисемсĕр пуҫне пирĕн ҫылай хапрăк-савăтсенҫе рапоҫҫисен хастарлăхне, рапоҫҫи массăн активлăхне хавассăн ҫĕклесе пырса, рапоҫҫи массăна йертсе пырас тĕлĕшре тăрлавлă ĕҫлеменни калама ҫук нумай ҫăрмавлать. Самотĕк теҫҫĕ, ҫавнашкал ĕҫлени питĕ кансĕрлет.

Хăш-пĕрисем пирĕн ҫана тавăрса ҫурăм ҫине тар тухиҫҫен ĕҫлес вырăнне урам тăрăх, аллине кăсйана ҫиксе, ҫăварне кукăр ҫĕлĕм хыпса пак-пак тутарса ҫÿреҫҫĕ. Вара вĕсем: темле ĕҫ наҫар пырать,

рапоҫҫисем наҫар ĕçлеççĕ пулас,—текелесе хăйсен айăпĕсене пытарма хăтланаççĕ. Ĕç тăрлавсăр пулни вăл—ĕçе йертсе пыра кансем тăм шăхлиҫĕ каланинҫен килет.

Капла текех йурамасť. Тимлесе ĕçлемелле. Кирек мĕнле ĕçе те пикенсе тумалла. Шалттай-палттайа сотсиалисăм стройккинҫе пĕртте ҫăтмалла мар. Сотсиалисăм стройккинҫе хĕрӳллĕ ĕç йурăхлă.

Мĕн пур рапоҫҫисен хастарлăхĕпе вирлĕн ĕçлесе, йышăннă прокраммăна пурнăçа кĕртетпĕрех тесе пикенсе ĕçлесе, кăçал малтанхи ултă уйăх хушшинҫе пулнă прорывсене пĕтермелле. Окťапĕр револҫутси 14 çул тултарнă уйава промфинплана пурнăçа кĕртмесĕрех тухма намăс та. Çавăнпа та пирĕн претприйаттисенҫе çак виççĕмĕш кварттăлра çав виççĕмĕш кварттăла хăйне тивĕçлĕ прокраммине те, иртнĕ 6 уйăх хушшинҫе парăма тăрса йулнă ĕçсене те туса пĕтермелле. Çавна тултарса Окťапĕр револҫутси уйавне хĕрлĕ йалавсемпе, çĕнтерӳ йуррисемпе тухмалла.

## Алăсти промышлĕннăçĕ.

Алăсти промышлĕннăçĕ 1926—27 çулта 8.443 пин тенкĕлĕх тавар кăларнă. Вăл шутран копператсиленнĕ алăсти промышлĕннăçĕн 709 пин тенкĕлĕх анҫах пулнă.

Кăçал копператсиленнĕ алăсти промышлĕннăçĕ 22 мĕлйун тенкĕлĕх кăлармалла. Паллах ĕнтĕ ку ҫыхвăр питĕ пысăк ҫыхвăр, ăна тултарма нумай ĕçлемелле.

Алăстаçăсем халĕ пирĕн 52 пин çын шутланаççĕ, анҫах вĕсенҫен алăсти копператси йĕркипе 23 пин кăна копператсиленнĕ.

Алăстисене копператсилес ĕçе ҫасрахрах вăйлатмалла, тискер(тикки) алăстисене хăвăртрах копператсийе пĕрлештермелле. Епĕр тата çакна палăртасшăн.

**Алăстисен ĕç пахалăхĕ наҫар.** Кирпĕҫ ертелĕсем йурăхсăр кирпĕҫсем кăлараççĕ. Тепĕр ҫух тăмран тунă кирпĕҫ калит тăванçи пулнă пулин те çăмăр айĕнҫе пĕр кун тăрсанах тепĕр хут тăм пулса тăраť. Çавнашкал кирпĕҫе Çĕмĕрле кăмпинаҫĕ ваҫҫи те турттарса пынă.

Мĕнле намăса пĕлмеççĕ-ши, мĕнле кĕççе çĕленĕ-ши пиҫĕсем çине çавнашкал йурăхсăр кирпĕҫ туса пин кирпĕҫшĕн 100 тенкĕ ытла илекенсем?! Вĕсем намăса пĕлме мар, Совет влаçĕн сак кунĕсенҫен ма хăрамаççĕ-ши?!

Çавнашкал ултавăçпа пурнакан ертелсене кирпĕҫе илекен оркăнсен акĕнҫĕсем пулăшаççĕ, вĕсем çавнашкал йурăхсăр кирпĕҫех йышăнаççĕ пулас.

Çавӑнпа çав акӗнтсене йарсӑ илме тивет. Йурӑхсӑр кирпӗҫе йышӑнса патшалӑх укçи-тенкине харама кӑларма йурамасҭ. Çав акӗнтсен тум-çурҫӗсене сут урлӑ туртса илсе сутмалла, вара çав укçапа йурӑхсӑр кирпӗҫ илсе сайа йанине тӳлеттермелле. Пуçран шӑлма йурамасҭ. Хушнӑ ӗçе ҫипер тутарас пулаҭ. Ҫипер туманнисене Совет саккунӗсемпе вирлӗрех паллаштарма лекет. Вара кӑпӑр-капӑр ӗçлесси пӗтет.

Çавнашкалах ҫул кӑларса турттаракансене те, хӑйӑр кӑларса турттаракансене те, тата ыттисене те. лайӑх ӗçлемесен айӑплас пулаҭ. Хуҭ те мӗнле ӗç пултӑр, пур ӗçе те йӗркеллӗ, тӑрлавлӑ тӑвас пулаҭ, шӑпӑр-шапӑр сотсиалисӑм стройккинҫе кирлӗ мар.

**Алӑстисем хушшинҫи кулакла елементсене тасатса, ӗçе ҫӑрмантаракансене сирпӗтсе, алӑстисен пайанах ӗç пахалӑхне хӑпартмалла, прорывсене пӗтерсе, кӑçалхи прокрама тултарассишӗн пикенсе кӗрешмелле.**

Профинплана тултарассинҫе пулнӑ ҫылай пысӑк çитменлӗхсемпе прорывсем вӗсем—пур майсемпе усӑ курма пӗлменнинҫен, хапрӑк-савӑтсенҫи, çавӑн пекех алӑсти ертелӗсенҫи ӗçе пуçарса пыма пӗлменинҫен килнӗ. Çакна пула пирӗн ума çакӑн пек сатаҫ тухса тӑраҭ: «Поҫшевиксен технӗке çӗнсе илме пӗлмелле. Поҫшевиксен хӑйсен çпетсиалиссем пулма вӑхӑт çитнӗ. Мӗншӗн тесен рекконструкси тапхӑрӗнҫи ӗçсене пурне те технӗккӑ татса параҭ» (Сталин).

## Йалхуçалӑхӗ.

Йалхуçалӑх тӗлӗшӗнҫе те пирӗн респуплӗк татӑклӑ ӳсӗмсем турӗ. **Ҫӑваш автономийӗ 11 çул тултарнӑ çӗре респуплӗкре ӗлӗкхи сухапуçне ӗçрен кӑларса пӗтертӗмӗр. Йалхуçалӑх ӗçне машшинсемпе, трактӑрсемпе ӗçлетпӗр, йалхуçалӑх пирӗн сотсиалисӑм çулӗ çине тухса пыраҭ.** Ҫухӑнсем хыççӑн вӑтам хресҫенсем те колхос йухӑмӗ йенелле çаврӑнаççӗ. Совет сойусӗпе илсен «колхоçнӗк хресҫенсем çӗр ӗçӗнҫе тӗп вырӑн йышӑнҫӗç. Колхоссем тырӑ тӑвассинҫе çеç мар, йалхуçалӑх паракан ытти ҫӗрӗ тавар тӑвас тӗлӗшрен те (çӗрмамӑк, сахӑр кӑшманӗ, хӗвелçаврӑнӑш т. ыт.) тӗп вырӑн йышӑнҫӗç.

Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе те ҫухӑнпа вӑтам хресҫенсем ийулӗн пӗремӗш тӗлне 50 пин хуçалӑх колхосра пӗрлешсе тӑраççӗ. Вӑл Ҫӑваш респуплӗкӗнҫи ҫухӑнсемпе вӑтамсен шутӗнҫи хуçалӑхсенҫен 30 проҫҫӑна йахӑн, 6 уйӑх маларах, кӑçалхи йанварӗн

1-мĕшĕнҫе, 13 проҫҫăн ытларах анҫахҫĕ. **Ҫăваш хресҫенĕсем 50 пин хуçалăх, виç пайран пĕр пайĕ—пайан кун колхосра—сотсиалисăм çулĕ çине çирĕппĕн тăҫĕç.**

**Колхоссем шултраланнăçемĕн шултраланса пыраççĕ.** 1928 çулхи октăпĕрĕн 1-мĕшĕнҫе вăтамăн шутласан пĕр колхосра 15 хуçалăх пулнă, çав ҫысларах 1929 çулта 18 хуçалăх, кăçал ийулĕн 1-мĕш тĕлĕнҫе 35 хуçалăха çитнĕ; ултă уйăх маларах, кăçалхи йанварĕн 1-мĕшĕнҫе, 26 хуçалăх анҫах пулнăҫҫĕ.

Колхоссем хуçалăх йенҫен те аталанса пыраççĕ. **Колхоссен, çĕр ĕçне пысăк лайăх машшинсемпе тунă майпа, 1930-мĕш çулта тырпул тухăçлăхĕ уйрăм хуçалăхсенҫен 25—30 проҫҫăн ытларах, тухнă.** Çапла 25—30 проҫҫăн тырпул тухăçĕ маларах пулни вăл—колхоссен Илйа пророк пулăшнипе пулнă йапала мар, колхоçнĕкссем тимлĕрех те, лайăхрах та ĕçленĕ майпе пулнă. Хуçалăх тупăшлăхĕ ҫылай колхоссенҫе уйрăм хуçалăхлă хресҫенсенҫен 200 проҫҫăн, тата ытларах та ўснисем пулнă. **Колхоссен акса усă куракан çĕрĕ те уйрăм хуçалăхсенҫен ытларах,** мĕншĕн тесен колхоссем хура пусăри çĕре те ахаҫ вырттармаççĕ; вĕсем унта та виккă акса, çĕрулми лартса туса илеççĕ. 1930 çулта, çав май, колхосра вăтамăн шутласан, пĕр кил пуçне тырпул акнă çĕр шуҫĕ **4,59 кектар** тивнĕ, уйрăм хуçалăхсенҫе—**4,24 кектар.** Кăçал **çуртри уйĕнҫе колхоссенҫе пĕр киле 2,11 кектар тивет, уйрăм хуçалăхсен 1,82 кектар.**

**Сухапуçне пĕтерсе, трактăр çине куçса йалхуçалăхне технĕк йенҫен пĕтĕмпех улăштарса пыратпăр.** Машшинпа трактăр стантси (МТС) йал тĕсне паҫах урăхлатса пыраť, вăл стантсăсем йала сотсиалисăм çулĕ çине кăларассинҫе пысăк вырăн йышăнҫĕç. Вĕсем—талкăшпех колхоса куçса кулаксене класĕпех пĕтермелли тĕреклĕ пунктăсем пулса тăраççĕ.

Çураки вăхăтĕнҫе **Ҫăваш респуплĕкĕнҫе виçĕ МТС ĕçлерĕç** (Вăрнар, Улатăр, Канаш районĕсенҫе), **трактăрсем респуплĕкĕпе мĕн пурĕ 243.** Халĕ Вăрмарта тата тепĕр çĕнĕ стантсă уçăлаť. Ĕлĕк революҫутсиҫҫен ҫăваш ĕçхресҫенĕ хăй уйĕсенҫе трактăр ĕçлессине тĕлĕкре те курма хăйайман.

Ҫăваш респуплĕкĕ потрепиттĕл районран таварлă (происвоťашҫи) район пулаť. Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕç çине куçатпăр ĕнтĕ. Выҫăх апаҫĕ ваҫҫи акнă куҫттурăсем 1930 çулта 14.000 кектар пулнă, кăçал 47 пин кектара çитрĕ, çапла 340 проҫҫăн ўсрĕ.

**Выђăх шуђĕ те Ђăваш респуплĕкĕнђе ўссех пырат̆.** Вăл çак таплитсăран лайăх курăнат̆:

| | 1923 çулта | 1930 çулта |
|---|---|---|
| Лашасем . . . | 108.948 пуç пулнă | 156.000 пуç |
| Ĕнесем . . . | 163.656 „ „ | 199.000 „ |
| Сыснасем . . | 47.164 „ „ | 178.500 „ |
| Сурăхсем . . | 438.847 „ „ | 834.000 „ |

**Колхосри выђăх шутне** илсен, унта та питĕ пысăк ўсĕмсем.

| | 1930 çулта | 1-VII-31 ç. | Ўсĕм |
|---|---|---|---|
| Лашасем. . . . | 10.000 пуç пулнă | 26.000 пуç | 260% |
| Ĕне выђăх. . . . | 2.400 „ „ | 5.800 „ | 240„ |
| Сысна. . . . . . | 1.800 „ „ | 7.200 „ | 400„ |
| Сурăхсем. . . . . | 5.250 „ „ | 11.400 „ | 220„ |

Пирĕн хаљ сĕтлĕ ĕне фермисем 64, вĕсенђе ĕне выђăх 2.000 пуç, сысна фермисем 110, вĕсенђе 3.500 пуç сысна.

Ăратлă шултра мăйракаллă выђăх ĕрђетсе саракан рассатнĕксем 27, вĕсенђе ăратлă выђăх (ĕне-вăкăр) 1.000 пуçран ытла. Ăратлă сысна ĕрђетсе саракан рассатнĕксем 38, вĕсенђе 1.200 ăратлă сысна.

Йалхуçалăхне хăпартса çĕнетсе пырас майпех епĕр йалхуçалăх паракан протуксинђен тавар тума пысăк савăтсем лартатпăр. Ун пек савăтсем пирĕн хаљ 19, тата 8 инкупаттори.

**Совхосем** те Ђăваш респуплĕкĕнђе тĕрекленсе пыраççĕ. Пирĕн хаљ 11 совхос, вĕсен çĕр талкăшĕ 12.500 кектар, 1920 çулта совхоссен çĕрĕ 880 кектар анђах пулнă.

Йалхуçалăхне тĕпĕ-йĕрĕпе çĕнетес тĕлĕшпе пирĕн çитĕнўсем ђăнах та калама çук нумай. Анђах пайан кун тăракан сатађсенђен шутласан тата хĕрўллĕрех, тата хăвăртрах йамалла.

**Вак-тĕвек хуçалăх йĕркисене пăрахса пысăк хуçалăхсем, колхоссем тăвас ĕçре епĕр, ђăваш ĕççынниисем, хамăр Ђулхула крайĕнђи вăтам шутран кайа йултăмăр.**

**Текех капла хўрере пыни пĕртте килĕшўллĕ пулас çук. Ђăваш ђухăнпа вăтам хресђенĕсем колхоссем тăвас тĕлĕшре хўререн тухса малти рете тăма тăрăшмалла, пĕтĕм Совет сойусĕнђи ĕçхресђенĕсемпе ала-алăн пĕрле ыымалла. Хăвăртрах клас тăшманне, кулака çĕмĕрмелле.**

Текех ĕнтĕ уйрăм хуçалăхпа пурăнса май килес çук. Уйрăм хуçалăх йалавĕ çĕтĕлсе пĕтес патне çитнĕ. Пĕтĕм Совет сойусĕнђи ĕçхресђенĕсем 54,7% колхоса кĕнĕ, нумай çĕрте 80—90%

хресҫен халĕ колхосра. **Ҫăваш хресҫенсен те 50 пин хуҫалăх колхосра. Виҫ пайран пĕр пайĕ колхосра.**

Йепле вара пирĕн хăш-пĕр колхоса кĕмесĕр туртăнса тăракан ҫăваш ҫухăнпа вăтам хресҫенсем хăйсене хăйсем пĕтĕм Совет сойусĕнҫи темиҫе мĕлйун колхоҫнĕксенҫен ăслăрах тесе шутлаççи мĕн вара!? **Ниушлĕ вĕсем ку таранҫҫен те пупсемпе кулаксен ултавне туйса илеймен? Ниушлĕ вĕсем хушшинҫе татах ҫылай вăхăт ҫăхăмласа тăма шутлакансем пур?**

**Апла текех килĕшмĕ. Хăвăртрах Ленин партти кăтартса панă ҫул ҫине тухмалла. Хăвăртрах сотсиалисăм ҫулĕ ҫине тухмалла.** Хăвăртрах сотсиалисăм, Ленин ҫулĕ ҫине тăмалла. Хăвăртрах кăпиталисăм йĕркине пăрахăҫа кăларса уйрăм хуҫалăх йалавне пăрахса тулăх пурнăҫ ҫулĕ ҫине тухмалла, ҫĕнĕ пурнăҫ, хĕрлĕ йалавĕ айне тăмалла.

СТАЛИН йулташ калаť: **„Колхос хресҫенсене ҫухăнлăхран хăтарас тĕлĕшпе пĕртен пĕр меслет пулаť“** —тенĕ.

Пĕлтĕр колхоҫнĕксене панă ответра СТАЛИН йулташ колхосран тухакансем ҫинҫен ҫапла каланă: „**Вĕсем лайăх тумаççĕ. Колхоссенҫен кайалла тухнипе вĕсем хăйсен интересĕсене хирĕҫех пыраççĕ, мĕншĕн тесен, колхоссем ҫеҫ хресҫенсене ҫухăнлăхран, тĕттĕмлĕхрен тухма параççĕ. Колхоссенҫен кайалла тухнипе вĕсем хăйсене йапăх условисене лартаççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем Совет влаçĕ колхоссене паракан ҫăмăллăхсемпе, лькоттăсемпе усă курассинҫен пăрăнса йулаççĕ“**—тенĕ.

ЛЕНИН каланă: **„Вак хуҫалăхпа нушалăхран тухас ҫук“** (16 т., 378 стр.).

**„Епĕр ĕлĕкхи пекех вак хуҫалăхсенҫе ларсан, ирĕк ҫĕр ҫинҫе ирĕклĕ краштăнсем пулсан та, ҫавах пĕтсе ларас хăрушлăх умĕнҫе тăратпăр“** (14 т., 1 п., 169 стр.).

ЛЕНИН каланă; **„Ушкăнла ертелленсе, йулташланса ĕҫленипе анҫах империалисăм вăрҫи пире хуса кĕртнĕ ҫăтлăхран тухма май пур“**(16 т., 375 стр.).

**„Шултра, кăтартуллă хуҫалăхсенҫе пĕрлешсе ĕҫлеме тытăнмалла, мĕншĕн тесен, унсăрăн ҫав тери хуҫалăх наҫарланнинҫен, ҫав тери ҫăтма май ҫук Раççей условисенҫен тухма ҫук“** (14 т., 1 п., 169 стр.).

Ҫакă пĕтĕмпе мĕне пĕлтерет?

Вăл—хресҫенсене нушапа тĕттĕмлĕхрен тухма паракан майсем—пĕртен пĕр колхоссем анҫах пулнине пĕлтерет.

ЛЕНИН калаť: **„Совет влаçĕ комунсемпе йулташлăхсене пирвайхи вырăна хурса тӳрех ытларах хисеплет“** (15 т., 518 стр.).

Ку мĕне пĕлтерет?

Вăл—Совет влаçĕ колхоссене ђкоттăсем парассине уйрăм хуçалăхсенђен ытларах хисеплессине пĕлтерет. Вăл ĕнтĕ колхоссене çĕр парас йенђен те, машшинсем, трактăрсем тăратас йенђен те т. ыт. те, налок хурассине çăмăллатса та, кивçенлĕх йенђен те колхоссене çăмăллăхсем парассине пĕлтерет.

Совет влаçĕ мĕншĕн-ха колхоссене ђкоттăсем параť, ытларах хисеплет?

**„Мĕншĕн тесен, колхоссене ытларах пулăшни ђухăнсемпе вăтамсене пулăшнин ђи тивĕçлĕ форми пулса тăраť“**—тет СТАЛИН йулташ.

Колхос тăвас ĕçре кулак пирĕн ђи пысăк тăшман. Кулак вăл Совет влаçĕн тăшманĕ. Пирĕн унпа килĕшӳ çук, пулма та пултараймасť.

Акă мĕн калаť ЛЕНИН кулак çинђен:

„Кулаксем—ђи хайар, ђи усал, ђи тискер експлоаттаттăрсем Вĕсем историре ытти патшалăхри çĕршывсенђе пĕрре çеç мар помешђĕксен, патшасен, пупсен, кăпиталиссен влаçне кӳнĕ. Кулаксем помешђĕксемпе кăпиталиссенђен те ытларах. Анђах халăх хушшинђе кулаксем сахаллăн... Çак çын йунне ĕмекенсем вăрçă вăхăтĕнђе халăх нушипеле пуйрĕç, тыррă тата ытти протуктăсен хакне те ӳстерсе вĕсем пин, темиçе çĕр пин тенкĕ укçа пухнă. Çак ерешменсем вăрçăпа нађарланнă хресђенсен, тата выçă рапођђисен шуђĕпе мăнтăрланса пынă. Вăл сĕлĕхсем (пийавккăсем) ĕçхалăх йунне ĕçнĕ, хулара, тата хапрăкра рапођђисем мĕн ђухлĕ выçăхса пураннă, çавăн ђухлĕ вĕсем пуйанлансах пынă. Çав йун ĕçекенсем хăйсен аллине ӳлпутсен çĕрĕсене илнĕ, илеççĕ те, вĕсем каллех ђухăн хресђенсене пусмăрлаççĕ“ (20 т., 2., 257 стр.).

„Епĕр çав йун ĕçекен ерешменсене вĕсен експлоаттатсиллĕ туртăмне хĕссе, картласа пырас политтĕке тытнипе ђăтса пытăмăр. Ђăтнă, мĕншĕн тесен кулак хуçалăхĕпе кулак происвотствине нимĕнпе те улăштарма çук пулнă, халĕ епĕр вĕсен хуçалăхĕсем вырăнне колхоссемпе совхоссен хуçалăхĕсене тăратма пултаратпăр. Çав ерешменсемпе йун ĕçекенсене малашне те ђăтма кирлĕ мар. Колхоссене тĕртсе çунтаракан, колхос ĕçĕнђи хастарлă ĕçлекен йулташсене вĕлерекен, акана пăсма хăтланакан йун ĕçекенсемпе ерешменсене малашне те ђăтни—рапођђипе хресђенсен

интересне хирĕçле пыни пулаť. Çавăнпа та, кулаксене класĕпех пĕтерес политтĕке çине тăрса куллен кун пољшевиксем анђах пултаракан вăйпа пурнăçа кĕртсе пымалла"—тет СТАЛИН йулташ.

Çав майсемпе епĕр ђăваш патракĕсене, ђухăнпа вăтам хресђенсене пĕр туртăнса тăмасăр çĕнĕ çул çине, сотсиалисăм çулĕ çине ђасрах тухма ђĕнетпĕр. **Окťапĕр револютси 14 çул тултарнă уйав тĕлне Ђăваш республĕкĕ хамăрпа йунашар республĕксемпе оплăçсене хăваласа çитмелле. Талкăшпех колхоса куçас хума хĕрўллĕн вăйлатмалла.**

## Финанс хуçалăхĕ.

Халăх пурнăçĕ, халăх хуçалăхĕ хăпарнă май пирĕн Ђăваш республĕк пўтшеђĕ те çулран çул ўссе пыраť. Ăна кăтартакан ђыхвăрсем çаксем пулаççĕ.

| Çулсем | Пўтшет пысăкĕш (пин тенкĕпе) | 1çын пуçне тивекен расхут |
|---|---|---|
| 1922—23 | 290,7 | 0 т. 37 п. |
| 1923—24 | 1 409,8 | 1 „ 87 „ |
| 1924—25 | 3.658,7 | 4 „ 71 „ |
| 1925—26 | 4.869,9 | 5 „ 47 „ |
| 1926—27 | 6.037,1 | 6 „ 75 „ |
| 1927—28 | 9.734,8 | 7 „ 99 „ |
| 1928—29 | 13.108,0 | 14 „ 69 „ |
| 1929—30 | 20.247,3 | 22 „ 82 „ |
| 1931 çул. | 25.023,0 | 26 „ 70 „ |

Çапла кăçалхи пўтшет 1922—23 çулхи пўтшетрен 80 хута йа хăн вăйлăрах. Финанс хуçалăх планне пурнăçа кĕртнĕ тĕлĕшре кăçалхи ултă уйăх хушшинђе, пуринђен ытла халăх сретствине мопилисатсилес ĕçре ђылай пысăк прорывсем пулса тăђĕç. Вăл прорывра потрепиттĕл копператсийĕ пит нумай айăплă. Вăл прорывсем ĕçре кирлĕ пек ĕçлемен пирки, йалсовеђĕсене, копператсин айалти оркăнĕсене ĕçе ђипер çыхăнтарманнинђен нумай килђĕç. Çав прорывсене пĕтерме пур оркăнсен те калама çук вирлĕн кĕрешмелле. Çеççире ун çинђен уйрăм ыйту лартнă. Çавăнпа урăх каламасăрах, култтур ĕçĕсем çине куçатăп.

## Култтур ĕçĕсем.

Ђăваш республĕк ĕçхалăхне култтурлă тăвас ĕçре те çитĕнўсем пит пысăк. Револютсиђђен ђăваш хушшинђе хут пĕлекенсем пĕтĕмпе те 17—18 прођђăн анђах пулнă. **Халђхи вăхăтра пирĕн хут пĕлекенсен шуђĕ 75 прођђăнран иртсе карĕ.** Патша вăхăтĕнђе

ђăваш ĕçхалăх çамрăк ађисем 25 прођђăна йахăн анђах шкулсене çÿреме пултарнă. 1914-мĕш çулта халђхи Ђăваш респуплĕкĕ йышăнса тăракан вырăнта (Улатăрпа Пăрађкав районĕсене шутламасăр) мĕн пурĕ те 600 шкул анђах пулнă. Вĕсем те пулин нумайĕш ђеркковнă-прихходски шкулсем пулнă. Çав 600 шкулта мĕн пурĕ те 35.000 ађа анђах вĕренсе тăма пултарнă. **Халђ пирĕн шкул çулĕнђи ађасем пурте (99%) шкула çÿреççĕ. Халђ пирĕн 15.000 шкул ытла**

Тем ђухлĕ ликпунктăсем. Вĕсенђе пĕтĕм хут пĕлменнисенђен 81 прођђăнĕ вĕренеççĕ. **Çапла епĕр кăçал хутпĕлменлĕхе тĕппипех пĕтерсе çитеретпĕр.** Кашни йалта пекех хĕрлĕ кĕтессем пур, кашни пилĕк-улт йалта пĕр вулав çурђĕ. Ађа пахђисем, ађа плошђаткисем, ађа йаçлисем. Вăл сăмахсене епĕр ĕлĕк илтмен те. Халђ кашни колхосрах ађа йаçли. Ађа пахђисен шуђĕ 800 йахăн.

**Катăрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн 28 профшкулпа маçтерской, 8 хапрăк-савăт шкулĕ, 18 технĕккăм, 3 рапфак, 1 совпартшкул, 1 инçтитут, 1 колхос универçиттеђĕ. Вĕсенђе 8 пине йахăн çын вĕренеççĕ. Çенŏапĕрте тата тепĕр аслă шкул—йалхуçалăх инçтитуђĕ уçалаŏ.**

Окŏапĕр тивĕçлĕхĕпе Ђăваш респуплĕкĕнђе те сотсиалисăмла куљттур — пролеттари ăшђиклĕ, хурмипе натсиллĕ шутланса тăракан куљттур, етем историнђе халђђен курман хăвăтрлăхсемпе ÿссе пыраŏ. Рапођђи класпа унăн малта пыракан ушкăнĕ—Комуниссен партти—йертсе пынипе темиçе ĕмĕр хушши тĕттĕмлĕхре пурăннă ђăваш ĕççынни те сотсиалисăмла куљттур тăвассишĕн пољшевикла кĕрешет.

Ђăваш респуплĕкĕнђе 11 хаçат тухаŏ, 10 шурнал Ђăваш ĕçхалăх хушшине темĕн ђул литтераттур тăван ђĕлхепе çапăнса саланаŏ. Револђутсиђђен пĕр хаçат та тухман. Шкулсенђе вĕренмелли кĕнекесене те ђăвашла пиђетлесе кăларатпăр.

Парттин тĕп çулйĕрне тĕрĕс тытса пынипе, парттин натси политтĕкне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе пирĕн шкулсем ђăн-ђăнах комунисăм çутăлăхне саракан вуђахсем пулса тăраççĕ. Вĕреннĕ ĕççынни, куљттурлă ĕççынни сотсиалисăм строиттĕлствин хăвăртлехĕссне ÿстерессишĕн тата вирлĕрех кĕрешет.

**Епĕр ђăнахах куљттур çулĕ çине тăтăмăр, вĕренетпĕр, хутпĕлменлĕхе пĕтеретпĕр. Малашне пирĕн тата пикенерех куљттурлă ĕçлеме вĕренмелле.**

## Халăх сывлăхне упрасси.

Халăх сывлăхне упрас тĕлĕшре те пирĕн çитĕнӳсем пысăк. 1914-мĕш çулта хаљхи Ђăваш республĕкĕ йышăнакан выранта 21 пĕђĕк пуљнитса пулнă, халĕ 47, вĕсенђен 11-ĕш куç пуљнитси. Çав çулах (1914 ç.) пĕтĕм пуљнитсасенђе 680 койккă шутланнă. Халĕ 1500 койкка çитет.

Пĕр траххомпа кĕрешес ĕçпех кăçал республĕкре 20 тухтăр ĕçлеççĕ.

Куљттурпа сывлăх тĕлĕшĕпе пирĕн пӳтшет урлă 1922—23 çулта 159 пин тенкĕ расхут тухнă. Кăçал 14 мĕлйун та 740 пин тенкĕ тухмалла. Çапла **куљттурпа сывлăх ĕçне кайакан укçа шутне 7—8 çул хушшинђе епĕр 90 хут ӳстертĕмĕр.**

* * *

Халĕ ĕнтĕ ђăваш ĕççынни ĕлĕкхи мĕскĕн çын мар, пуçа тайса çӳремест. Унăн йуррисем те пĕтĕмпех урăхла:

Пĕлеççĕ, паллаççĕ, епĕр ĕлĕкхи ђăвашсем мар,  
Епĕр колхос çыннисем, çĕнĕ пурнăç тăватпăр,  
Трактăрсемпе ĕçлетпĕр, куљттур ĕçне вĕренетпĕр.  
Тĕттĕмлĕхе пĕтеретпĕр, електритсă çутатпăр,— тесе савăнăçлă йурăсем йурлаççĕ.

---

Ђăваш автономи 11 çул тултарнă тĕле Ђăваш республĕкĕнђи рапођђи клас, ђухăнпа вăтам хресђенсем, пĕтĕм ĕçхалăхĕ пурнăçа çĕнетес тĕлĕшре ђăн-ђăнах татăклă çĕнтерӳсем турĕç.

Çапах та куљттурлăха хăпартас, хамăр халăх хушшинђен пролеттариатпа катăрсем хатĕрлес, хуçалăхпа куљттур тĕлĕшĕнђен кайа йулнăлăха пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн умра тата та пысăк ĕçсем тăраççĕха. Вăл ĕçсенђи йăвăрлăхсене епĕр çĕнтеретпĕрех. Вăл йăвăрлăхсене çĕнтерме автономин 11-мĕш уйавĕ тĕлне тунă çитĕнӳсем шанђăк параççĕ. Вăл йăвăрлăхсене çĕнтерме рапођђи класпа хресђенсен тĕп массин калама çукпысăк хастарлăхĕ шанђăк парать. Вăл йăвăрлăхсене çĕнтерме пирĕн парттипе унăн Тĕп комиттеђĕн сотсиалисăм строиттĕлствине Ленинла тĕрĕс йертсе пыни, натси ыйтăвĕнђе Ленин политтĕкне тытса пыни шанђăк парать.

**«ЛЕНИН йалавĕпе епĕр Октăпĕр револљутсишĕн пынă кĕрешӳрэ çĕнтертĕмĕр. ЛЕНИН йалавĕпе епĕр сотсиалисăм строиттĕлствинђе**

**ҫӗнтерессишӗн кӗрешес ӗҫре татӑклӑ ҫитӗнӳсем турӑмӑр. Ҫак йалавпах епӗр пӗтӗм тӗнҫери пролеттари револютсинҫе ҫӗнтерӗпӗр. Сывӑ пултӑр ЛЕНИНИСӐМ!»** (СТАЛИН).

Сывӑ пултӑр хӑватлӑ сотсиалисӑмлӑ стройккӑ!
Сывӑ пултӑр вӑл стройккӑна тӑвакан пролеттариат!
Сывӑ пултӑр револютсин аслӑ ҫулпуҫӗ—Ленин партти!
Сывӑ пултӑр ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ!

---

[library stamp]

цена 12 коп.

Л. С. СПАСОВ

# 11 лет борьбы и строительства

чувашское государственное издательство
чебоксары 1931